14-мĕш çул тухать. Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# КАПКĂН

4-мĕш № Апрель 1938



Шупашкара пирвайхи пуйăс çитес кун

— Çитрĕ, çитрĕ кĕтнĕ хăна!

# Вăрăм мар калавсем

*ИВАН МУЧИ*

## Пуласси

Пулкăн-пулкăн халăх утаť çĕнĕ чукунçул станци патнеле Шупашкартан. Халăхпа лăках тулнă грузовиксемпе автобуссем вăшт та вăшт ирте-ирте кайаççĕ çатма пек йака çулпа пыракан халăх ушкăнĕсенчен...

Сылтăмра Шулла Усадки йалĕнчен иртсен, ковбойкă тăхăннă йаштак çамрăк:

— Ытлашши çук-ши сан?—тесе ыйтрĕ, хăйĕн ăшша пиçнĕ питне Йăван пичĕ умне тытса.

— Ик билет ман,—терĕ хирĕç Иăван,—анчах мана станци патĕнче кĕтекен çын пур... Хĕр. Пĕри ăна ваљљи... ехер вăл пулмасан...

— А? Мĕн? Билет? Ăçта? Еп илеп!.. Йарăр! Мана, мана! Камăн вара? Ан тĕрт! Мана, мана! Ырçын пул! Билечĕ ăçта? Мана!

Йăванпа пĕрле пыракан ушкăнри халăх кăткă пек йăшăлтатма тытăнса карĕ.

— Чăп пулăр,—кăшкăрса хучĕ лутра Йăвана сырăннă халăха, ковбойкă тăхăннă çамрăк йĕкĕт.
—Еп малтан ыйтрăм. Епĕ... Хĕрĕ килес çук... Билетне мана...Укçасăр мар, укçала. Еп—пĕрремĕш!

— Хаљ памастăп. Пĕрле Канаша кайса килме пулнă хĕр пымасан...

Пурте Йăвана, билет илесшĕн, йăпăлтатма тытăнаççĕ.

— Ванĕчка утма памастăр. Сирĕлсемĕр ĕнтĕ,—тет ковбойкă тăхăннă йĕкĕт, Йăвана сырăннă халăха сирсе йама тăрмашса.

Пĕри, тахăшĕ „хисеплĕ Иван Ксенофонтович“ тесе чĕнчĕ Йăвана. Тахăшĕ Йăванăн пичĕ çине тапса тухнă тарне хăйĕн сăмси тутрипе шăлса илчĕ. Темиçе çын ун пичĕ умне тутрисемпе вăшвăш çил туса пыраççĕ. Ăна майăр параççĕ. Пĕр пике шоколад тыттарчĕ. Тахăшĕ „хурăнташ“ тесе чĕнсе пăхрĕ ăна.

— Мана пар! Мана пар! Маруççу килмест,—тесе ĕнентерме хăтланаť пĕрле утакан халăх Йăвана.

Йăпăлтатса та пулин ытлашши билете çавăрса илесшĕн тăрмашакансем, вокзал патне çитерехпе, Йăвана алă çинче йатса пыма тытăнчĕç. Хыççăн кĕпĕрленсе пыракан халăх нумайланнă çемĕн нумайланаť.

Иван Ксенофонтович йатлă пĕр йĕкĕтĕн ытлашши пĕр билет пурри çинчен,—çав билета вăл, Маруççă йатлă хĕрĕ килмесен, урăх çынна сутма шухăшлани çинчен калакан хыпар халăх хушшине кăрах сарăлаť. Пурте билетсĕр йулнисем Йăван таврa кĕпĕрленсе тăрса, ни малала утма, ни кайала чакма памаççĕ ăна.

— Ку чукунçула туса пĕтерсен, малтанхи пуйăспа ăçта та пулин кайса килетĕпех, тесе сăмах парса хунăччĕ. Парах ĕнтĕ мана!

— Билетне ĕнер сутассине пĕлмен. Хам та сăмах парса хунăччĕ. Манах пар ĕнтĕ!

— Епĕ пĕрремĕш! Пĕрремĕш епĕ!—кăшкăрса тăраť, халăха чавсисемпе сире-сире йарса, ковбойкă тăхăннă йаштак йĕкĕт. Пĕр май кăшкăрса пынипе сасси урмăшсах ларнă хăйĕн.

Пуйăс çине ларма вăхăт çитрĕ. Маруççă хаљ те çук.

Билет пуррисем пуйăс çине ларма вашкăнчĕç. Билетсĕр йултăшсем Йăвана хĕссех хучĕç.

— Вилетĕп. Ан хĕсĕр!—тесе пĕтĕм вăйран кăшкăрса йарсан кăштах сирĕлнĕ пек пулчĕ халăх.

— Ав пĕрремĕш звонок. Пар билетна. Маруççу килессе текех ан кĕтсе тăр!—терĕ ковбойкă тăхăннă йаштак йĕкĕт ăна.

Иккĕмĕш звонок пулчĕ.

Билетне кăларма, аллине чĕре тĕлĕнчи кăсйине чиксе йараť Йăван. Унччен те пулмин сăнĕ пичĕ шапшурă пулса лараť ун. Йăван хыççăн пĕтĕм кĕтекен халăх сăнран ўкет.

— Манса хăварнă!—билет парасса кĕтекенсен чĕррине çуракан сасă тухса карĕ Йăван çăварĕнчен.—Киле, тепĕр пиншак кăсйине йулнă!

Тăр-тăр чĕтресе ытти кăсйисенче шыраса пăхаť шанчăкне çухатасшăн мар пулнă Йăван. Кăсйисене таварса йарсах шыраť. Çўп-çапсем тухатуха ўккелеççĕ, анчах... билет çук.

— Ей, ураланайман пăру!—тесе вăрсса илчĕ ăна ковбойкă тăхăнса йанă йаштак йĕкĕт.—Ма шантарса пытăн мана!

Хирĕç ним те каламарĕ Йăван. Шухăшĕ ковбойкăлă йĕкĕт çинче мар ун текех,—Маруççă утса килнине курнă мĕн хаљ вăл.

— Маруççă?! Килнĕ?!. Билет!.. Киле йулнă!.. Ех!

* * *

Çакăнта каланисем веçех Шупашкартан Канаша пăссажирсен пуйăсĕ малтанхи хут тухса кайăс паха кун пулассăн туйăнаť. Нумай çул хушши çунса кĕтсе тăнă ĕмĕт çитнĕ йатпа камăн малтанхи пуйăспа Çĕрпўве те пулин кайса килес кăмăлĕ пулмĕ ĕнтĕ!

## Вăхăтлăха çĕтнĕ пуç

Апрелĕн 26-мĕшĕнче Платон Иванович Салмин, ыйхăран вăрансан, карăнса илнĕ. Унтан вырăн çинчен тăрса ларса, чĕлĕм туртас „паха ĕçе“ тăвас килнĕ ун. Вăл шухăша пурнăçа кĕртес майпа, Платон хăрах чавси çине тайăнса, пуçне сытар çинчен илес, тенĕ. Пуçĕ ни сытар çинче, ни мăй çинче çук пек туйăннă.

Сехри хăпса тухнă. Ним тума пĕлменнипе, пуçне ик аллипех йарса тытас тенĕ, аллисем сывлăшра пуç майлă хыт йăпала тупаймасăр, хирехирĕç тонк пырса перĕннĕ.

Платон вăшăл-вашăл сиксе тăрса, тĕкĕр умне пырса пăхнă. Пуç чăнах та çук. Пуç ларма тивĕçлĕ вырăнта—пуш вырăн.

Тарăхнипе урайнеле лач сурса пăрахасшăн пулнă,—çăвар çук пирки сурма та пултарайман.

Çухалнă пуçне шырама тытăннă. Кроваť айĕнче те, сĕтел-пукан айĕнче те шыранă. Пуçăм кăмакана кĕрсе ларман-ши?—тесе кăмака питлĕхне уçса пăхнă. Унта та çук.

— Ара иртнĕ каçхине пуçăм етем калама çук ўсĕрччĕ. Ўсĕрскер ăçта та пулин выртсах йулнă ĕнтĕ вăл, те хампа пĕрле киле тавăрăннă хушăра пăлахайа персе çул çине ўксе йулнă-ха?

Пуҫӑр халӑх хушшине мӗнле тухса ҫӳрес? Кулсах вилӗҫ. Кайран: ма култарса вӗлеретӗн, тесе хамах ответ тыттарма хӑтланӗҫ.

Тултан арӑмӗ кӗрсе тӑнӑ. Платон ӑна:

— Арӑм, арӑм!—тенӗ хурлӑхлӑ сасӑпа.—Килха кунта. Пӑх-ха, ман ҫакӑнта, мӑй ҫинче пуҫ ҫуках вӗт. Пуҫӑм ҫухалнӑ манӑн. Ес курман пуҙ...

* * *

Кӑнтӑрлахи хӗвел ун тути ҫине хуллен шуса пырса лап хупласа лартсан, Платон ыйхинчен вӑранса, хӑйӗн ҫухалнӑ пуҫӗ ҫинчен аса илет те, хаш хуйхӑрса йарать. Кӗҫех хӑрах алли ни хытӑ мар, ни ҫемҫе мар ҫаврака йапала тӗлне пулать те, Платон Иванович кулать йарать:

— Ехе! Веҫех тӗлӗкре пулнӑ тем?!

Шанмасӑр тӗкӗр витӗр кайса пӑхать. Пуҫӗ мӑй ҫинчех ларать. Шӑрт пек тӑракан сухалӗ те пур, хуран кукли майлӑ сӑмси те вырӑнтах ларать. Ҫырӑ куҫӗсем тӗкӗр витӗр чӑр пӑхаҫҫӗ Платон ҫине. Ҫуҫӗсем тӑрмаланнӑ. Пичӗ ҫинче, шӗпӗнӗнчен ҫӳлтерехре, лапра пур. Кӑна ҫумала ӗнтӗ. Ҫусан кайӗ.

— Ку веҫех тӗлӗкре пулнӑ. Анчах аса илме те намӑс, ӗнер мӑнкун ӗҫкине йерсе кайнӑ епӗ. Ку вара пуҫа, тӗлӗкре мар, чӑнласах ҫухатни пулать. Намӑс, намӑс! Урам тӑрӑх пӗтӗм йала култарса асса ҫӳренӗ... Пуҫ пулнӑ пулсан, турра ӗненмен хушӑрах, мӑнкунта ӗҫсе ӳсӗрӗлсе пӳртӗм-ҫуртӑм ӑҫтине манса урамра выртса ҫывӑрман та пулӑттӑм. Текех ан ӗҫсемех, Платон!—терӗ те хайхискер, бригадиртан ыран ваҙҙи ӗҫ ыйтма тухса утрӗ.

## З А В

Ҫакӑн пек ҫырнӑ плакат алӑк ҫинче.

Алӑк умӗнче—шала кӗме кӗтекеннисем. Лараҫҫӗ, ура ҫинче тӑраҫҫӗ, сӑнпичӗсенчен вӗсем кӗтсе йалӑхса ҫитни паларать.

Мӑн куҫлӑхлӑ лутра етем шалти пӳлӗмре чӳречепе алӑк хушшинчи урай хӑмисем тӑрӑх каллӗ-маллӗ уткаласа ҫӳрет. Май мар пысӑк шухӑш ун пуҫӗнче.

„Ҫур ҫитрӗ. Хӗвел вӑйӗ ҫметӑра кӑтартнинчен ытларах тухать. Тфу! Мӗн каласа хутӑм! Ҫӳлти хӗвел вӑйӗ ҫметӑсӑрах расхутланать-ха вӑл. Н-да!.. Учрежденире ҫурхи илеме тивӗҫлӗ реорганизацисем тумала“...

Хайхискер вӑшӑл-вашӑл сӗтел хушшине кӗрсе ларчӗ те, блок-нот ҫине ҫыра пуҫларӗ. Тӑватпилӗк сӑмах ҫырать те, шухӑша кайса ларать. Шухӑша кайса килнӗ хыҫҫӑн, каллех виҫшер-тӑватшар сӑмах ҫырса хурать.

Ҫур сехете йахӑн ҫапла шухӑша кайса, ҫыра-ҫыра ларчӗ. Унтан кабинетӗнчен, вӑхӑтлӑха пулас, тухса шурӗ.

Вулаканӑм, епӗр иксӗмӗр ун сӗтел ҫинех тӑрса йулнӑ блок-ночӗ ҫине мӗн-мӗн ҫырса хӑварнине вӑрттӑн вуласа пӑхӑпӑр. Акӑ мӗн ҫырнӑ унта вӑл:

*„Ҫура тухнӑ май, хамӑн учрежденире ҫакӑн йышши ӗҫсем туса ларакан пайсемпе сӗтелсем тата комиҫҫисем уҫасси ҫинчен шухӑшласа пӑхас:*

*1. Пӗлтӗрхи йура учота илсе хурас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиҫҫи.*

*2. Ҫӳлти вӗҫен кайӑксене йышӑнакан тата регистрацилекен комиҫҫи.*

*3. Йур ҫӑвасса тӗп тӑвакан комиҫҫи.*

*4. Сывлӑшри електричӗства регистрацилекен сӗтел.*

*5. Йӑвӑҫ кӑчкисене-папкисене сӑнаса выртас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиҫҫи.*

*6. Малтанхи ҫеҫпӗлсене шыраса ларакан комиҫҫи.*

*7. Ландӑш чечексем сӗм вӑрмана ӳсме мӗн чухлӗ пулӑшнине сӑнаса выртакан тройкӑ.*

*8. Чӑхсен йӑва ҫинчи ларӑвӗсен протоколӗсене регистрацилекен тройкӑ.*

*9. Ҫӳлти хӗвел вӑйне миҫе киловат ӳстерессипе ҫинчен сӳтсе-йаван комиҫҫи...*

Вулакансем! Айӑп ан тӑвӑр! Суйрӑм епӗ кунта кӑштах. Миҫе процент суйнине хӑвӑр шутласа тупӑр. Кӑна есӗр пултарассӑн туйӑнать ӗнтӗ. Анчах бӳрократсен хисепӗ йулашки квартӑлта миҫе процент чакнӑ тесен... ним калама та пӗлейрес ҫук ӗсӗр те, ыттисем те...

## Йӗпе-сапара

Шупашкарти пичет ҫурчӗ ҫивитинчен шыв анать.

*Енгер ӳкерчӗкӗ.*



**ШӐНКӐРЧ: Ку йӑвана Шупашкарти пичет ҫуртне виттерекен инженер тунӑ пулас. Ҫӑмӑр шывӗ анать.**

# Ех, Лăриван, Лăриван!

*МИТТА ПЕТĔРĔ*

Тимĕрçĕ чĕлĕм туртать. Мăлатукпа сунтал çине шак-шак шаккană пекех вăл тутисемпе чĕлĕм чăпăкне пак-пак тутарать. Тĕтĕм мăкăрланать. Лаçă ăшне тĕтĕм тулать. Тьфу! Лаçă ăшне мар—канцеляри ăшне. Мĕншĕн тесессĕн тимĕрçĕ лаçăра мар, колхоз канцелярийĕнче чĕлĕм мăкăрлантарать. Ун çумĕнчех йăштакаскер, мăкăртарах сăмсалă картусласкер, картлă-картлă кунчалă атăласкер, тепĕр çын ларать. Вăл—аслă конюх. Конюх та ахалех лармасть. Чыкаркă мăкăрлантарать. Ларсан-ларсан, ик-виçĕ сăмах хушать. Ик-виçĕ сăмах хушать те, авăтнă чухнехи автан пек авăнса, урайне лачлаттарса сурать. Унтан каллех сăмах хушать:

— Мĕнле ĕçсем? Аван пуль?

— Пĕр майлă,—тет тимĕрçĕ.—Хăвăр мĕнле? Çемйесем çўреççĕ-и?

— Çўреççĕ-ха, сывлăхлă. Ху та куртăн пуль. Лăриван патĕнчен тухсан ман патăмра та пултăн вĕт ĕнер кaç?

— Пулнă, тет çав. Нимĕн те астумастăп.

— Астăватăн пуль. Ташларăн иккен те?

— Ташланă, тет çав. Йурланă та тет. Нимĕн те астумастăп.

— Суйатăн пуль. Арăмна та йепле кўпкерĕн иккен те?

— Çапла, тет çав. Çивĕт тунинченех çавăрса тытса, урайне тăсса антарнă, тет. Пайан ир хăй каласа пачĕ. Нимĕн те астумастăп.

— Астăватăн ĕнтĕ. Ахаль каламастăн. Манăн кантăка та çапса çĕмĕрсе хăвартăн иккен те?

— Çĕмĕрнĕ, тет çав. Ытла та ашкăннă, тет. Нимĕн те астумастăп. Ытла та хайар пулнă Лăриван ĕçки. Ытла та нумай ĕçнĕ.

— Курман пек ĕçнĕ!—терĕ конюх.

— Ху та манпа пĕрлех пулнă. Ху та вĕт ĕçнĕ!—терĕ тимĕрçĕ.

— Ĕçнĕ çав. Нимĕн те астумастăп.

— Есĕ те астумастăн-и?

— Сан пекех.

— Çук. Суйатăн. Манăн арăмпа ыталансах йурларăн иккен те? Ташларăн.

— Ташланă, тет çав. Çук. Астумастăп.

— Суйатăн. Астăватăн есĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ сан çине çиленсе арăма хĕнерĕм.

Çапла, тет çав. Çук. Астумастăп.

— Астăватăн есĕ. Ахаль çеç суйатăн.

— Апла-тăк, есĕ те суйатăн.

— Епĕ те çав... Йалтах астăватăп.

— Ех, тимĕрçĕ, тимĕрçĕ!—тесе мухмăрлă пуçпа йурра тăсрĕ конюх. —Ва-ку, ва-куу-знецы!.. Кузнецы куют и поют, приговаривают!.. Итле-ха, тимĕрçĕ тус! Çураки... çитрĕ.

Тимĕрçĕ самантлăха нимĕн те чĕнмерĕ. Конюх та ăна хирĕç, фото ўкернĕ чухнехи пекех, тўптўрĕ каçăрăлса, йĕпенсе исленнĕ чыкаркă тĕпне пĕр сасă кăлармасăр ĕмсе ларчĕ.

Тĕтĕм мăкăрланать.

— Итле-ха, тимĕрçĕ тус! Манăн урапасене йусамала вĕт... Çураки. Мĕншĕн халиччен те йусамастăн?

— Итле-ха, конюх пайахам,—терĕ тимĕрçĕ, чĕлĕмĕ ăшне тепĕр хут тапак тултарса.—Вара есĕ мĕншĕн халиччен те урапусене епĕ ĕçлекен лаçă умне илсе пымастăн? Такçанах йусаса параттăм.

— Суйатăн,—терĕ конюх.—Апла пулсассăн мĕншĕн плугсене халĕ те йусамастăн, такçантанпах лаçă умĕнче лараççĕ вĕт?

— Йусама май пулман вĕсене, йур айĕнче ларнă.

— Ха-ха-ха! Манăн урапасем те йур айĕнче хĕл каçнă çав. Халĕ тухрĕççĕ ĕнтĕ... йур ирĕлчĕ те. Халĕ илсе пыратăп ĕнтĕ. Анчах, малтан председатель патне килсе пăхас терĕм-ха. Мĕнле илсе каймалине пĕлес терĕм.

— Епĕ те çавăн патне килнĕ çав,—терĕ тимĕрçĕ.—Ăçтаха председатель?

— Килеймен-ха!—тенĕ сасă, уборщицă сасси, илтĕнчĕ пўлĕмрен.

Путексем шар-р-ри-и-и! çухăрса йачĕç пĕр харăс.

Шартах сиксе ўкрĕ тимĕрçĕ.

— Мĕншĕн кунта ку путексем? Пăх-ха... миçе! Вуннă, вунпĕр, çирĕм. Тьфу! Вăтăр та ытла пуль?!

— Ытла пулмасăр,—терĕ конюх,—тин çеç куратăн-и?

— Тин çеç. Хĕл касса та килмен еп ку канцелярине. Чĕнтермен. Чĕнмесĕрех килме кирлех те мар пуль, тенĕ.

— Хĕрĕх икĕ путек,—терĕ конюх.—Татах та пулаç-ха. Тапратса тултарнă сурăхсем татах та пур. Фермă вĕт. Сурăх ферми.

— Вара çак канцелярийĕнче-и фермă? Вара вăл фермă валли иртнĕ çулхинех вите тума пуçланăччĕ те.

— Иртнĕ çулхине çеç çав. Виçĕмçулхинех пуçламала пулнă йе тăватăмçулхинех—вара кăçал валли ĕлкĕретчĕ те пуль.

— Да-а,—терĕ тимĕрçĕ.—Начартарах ĕçлет пирĕн колхоз. Кам-ха пирĕн председатель? Халĕ те çав Иванов Кĕркури-и?

— Çук,—терĕ конюх.—Ăна кăларса Миронăв Мифодине суйланă вĕт.

— Çук-ук!—терĕ уборщицă, хăй пўлĕмĕнчен тухса.—Миронăвне те кăларнă халĕ. Иртнĕ пухура Гераçимăв йулташа суйларĕç.

— Çапла пуль çав, çапла,—тесе хăй сăмахне кайала илчĕ конюх.—Иртнĕ пухура пулайман еп. Кама суйланине пĕлме пултарайман.

Алăкран кăвакарма пуçланă сухаллă старик килсе кĕчĕ.

— Председатель пурчĕ-ши?—терĕ вăл, кĕнĕкĕменех çĕлĕкне хывса.

— Çук çав-ха. Килеймен.

— Вара мĕн туса тăрать-ха халиччен. Пăйавсене йусама хушаççĕ-ши тесе килтĕм те. Каллех ак иртнĕ çулхи пек, акана тухсассăн тин пăйавсем йавма, сўсменсене йусама шухăшлаççĕ-им вара? Халĕ, вăхăт пур чухне, йусаса парасшăнччĕ те. Ей, ай-йай!

Çав вăхăтрах председатель килсе кĕчĕ. Гераçимăв. Унпа пĕрлех шутĕçлевçĕ тата кладовщик. Канцелярийĕнче чĕлĕм мăкăрлантаракансем çине чылайчен пăхса тăчĕ председатель. Пăхса тăчĕ-тăчĕ те, сĕтел хушшине хутланса ларнă хыççăн:

— Пайанхи ларăва уçăлнă тесе шутлатăп!— терĕ.—Кун йĕркинче пĕртен-пĕр ыйту. Пурне те паллă ыйту—çуракине хатĕрленесси. Ку ыйтупа калаçма хам сăмах илетĕп. Мĕн тунă епĕр ку ĕçпе, çуракине хатĕрленессипе? Калас пулаť, питĕ сахал ĕç тунă. Вăрлăхсене çителĕклĕ хатĕрленĕ епĕр, анчах вĕсене суртламан. Йалхуçалăх машинĕсем çителĕклĕ, анчах вĕсене йусаман. Кала-ха, тимĕрçĕ, мĕншĕн йусаман? Ан кала. Каламасăрах пĕлетĕп. Лашасем те мăнтăр мар. Вĕсене вăйлă апат çине халĕ те тăратман. Кала-ха, коңух, мĕншĕн тăратман? Ан кала. Каламасăрах пĕлетĕп. Ťфу! Çăвар типсе кайрĕ, çурăлаť. Пар-ха шыв, е-е-й-й?! (уборшчица ăна пĕр çăпала сивĕ шыв параť). Та-ак! Вот, йулташсем! Çитес çуракине чăн-чăнах çураки пек ирттерес тесессĕн, мĕн тумала-ха пирĕн? Чи малтанах производствăлă ĕç планĕ тумала. Вăл плана мĕншĕн халиччен те туман? Кала-ха, хамран еп ыйтатăп. Ан кала. Каламасăрах пĕлетĕп. Есĕр те пĕлетĕр, йулташсем! Епĕ пĕр уйăх çеç-ха председатĕл пулса ĕçлетĕп. Пĕлетпĕр, пирĕн кашни уйăхрах председатĕл улшăнаť. Питĕ начар ĕçлеççĕ.

— Ĕçлемеççĕ, ĕçеççĕ!—терĕ старик.

— Чăш-ш-ш!—терĕ председатĕл.—Тĕрĕс калаť старик. Питĕ вăйлă ĕçеççĕ.

— Ху та!

— Чăш-ш-ш!

Путексем, хĕрĕх икĕ путек, пĕр харăс шарри-и-и! çухăрса йачĕç.

— Мĕншĕн ĕмĕртместĕн!—терĕ председатĕл, уборшчицă çине сиввĕн пăхса.—Мĕншĕн амăшĕсене кÿртместĕн?

— Халех. Акă, халех...

Путек амăшĕсем пĕр пÿрт кĕрсе тулчĕç. Хĕрĕх икĕ пÿтек хĕрĕх икĕ сурăх айне кукленсе чĕчĕ лăскама пуçларĕç.

— Перерыв тăватпăр, — терĕ председатĕл. — Вунă минутлăха. Чăш-ш-ш!

Урампала халăх иртет. Пурте пуçĕсене уснă. Малта пыраканĕсем пĕр пĕчĕкçĕ тупăк йатнă.

— Мĕн? Кам вара вилнĕ?

— Лăриван вĕт ку, тупăк хыççăн пыраканĕ. Ачи вилнĕ-и мĕн?

Халăхран уйрăлса, перерыв тăвакансен умне Лăриван утса пычĕ.

— Пысăк хуйхă, председатĕл йулташ,—терĕ вăл, Гераçимăв куçĕнчен пăхса.—Ĕнер каçхи ĕçкĕре манăн çывăракан ача çине пĕр ўсĕрĕ выртнă та... вĕлернĕ.

— Вĕлернĕ?! Кам? Кам пулнă санăн ĕçкĕре?

— Ху та пулнă. Ху та, йулташ председатĕл.

Председатĕл сасартăк сехĕрленсе ўкрĕ. Лăриван патĕнче ĕçкĕре пулнă тимĕрçĕпе коңух та пĕр-пĕрин çине пăхса чĕтренчĕç.

— Йураť,—терĕ председатĕл.—Ку ыйтăва еп пайанхи ларурах сўтсе йаватăп. Ку ĕçре кам айăпли курăнĕ унта. Кайах, Лăриван пичче!

Лăриван пăрăнса кайрĕ. Хăйне-хăй мăкăртатрĕ:

— Ех, Лăриван, Лăриван!—терĕ вăл.—Мĕнле-ха Лăриван еп. Çав çынсене, хулигансене, ĕçме те ĕçлеме те пĕлменскерсене ĕçке чĕнетĕп. Ех, Лăриван, Лăриван!..

Çакă вăл интереснă та, хурлăхлă, калама çук киревсĕр ĕç хам пуçран шухăшласа кăларнăскер мар. Çакă хурлăхлă та, калама çук киревсĕр, каçарусăр ĕç Патăрйел районĕнче, Çĕнĕ Тăрăн йалĕнчи колхозра, пайан кунченех Гераçимăв текенскер председатĕл пулса ĕçлекен колхозра нумайах та пулмасť пулса иртнĕ. Лăриван ачине лапчăтса вĕлерекене халĕ те тупса ответ умне тăратман-ха.

# Вулаканпа итлекен

**Чăвашсен радио саракан станци урлă илемлĕ литературă произведенисене час-часах илемсĕр вуласа параççĕ**

*Мохăв Ўкерчĕкĕ*



## Радио паракан пўлĕмре

**Микрофон умĕнчи вулакан:**
Çывăр, чунăм, йăпăш пул,
Тăмрапа йурлаť Джамбул.
Хĕлĕхсене йанратаť вăл;
Ырă ватă аллипе
Сиктерет сан сăпкуна вăл.
Шăппăн йурă йухтараť хаљ,—
Çывăр, канăçлăн, пепкем!..

## Радио итлекенĕн пўлĕмĕнче

— Ай, арăм, хăрарăм!
— Мĕнрен хăрарăн?
— Хамăрăн сăпкара выртакан ачамăршăн хăрарăм.
— Ара сăпка ачи пирĕн çук-çке!
— Çукне пĕлетĕп те.. Ара пулнă пулсан, „Сăпка йуррине“ вулана сасса илтсен, сарăмсăр вăранса, асса кайаťчĕ вăл.

# Йĕплĕ ҫăмах

## Шăшисемпе йĕкехӳресем

Колхозниксене валеҫмели тырра Пухтел районĕнчи (Куйбышĕв облаҫĕ) Кив Улхаш колхозĕ... вулав ҫуртне купаласа хуни тăваттăмĕш уйăх ҫине кайнă кунсенчен пĕринче, шăшисем, тырă шĕкĕлчесе тăрансан, сăмах шĕкĕлчеме тытăнса кайнă:

— Аванни нимех те ҫук,—чĕриклетнĕ ватă шăши.—Шăлсăр йултăм...

— Пирĕн шăлсем ҫирĕп-ха,—хирĕҫ тавăрса хунă тепĕр шăши.—Чикен тирекен пулчĕ. Тырри шутсăр чĕрĕ.

— Чĕрĕрен ĕнтĕ вăл чул пекех хытса ларнă.

— Чул пекех хытса ларни нимех те мар. Колхозниксем пирĕнпе кĕрешме тытăнасрăн хăратăпха,—тенĕ ватăрах тепĕр шăшийĕ.

— „Кĕрешме“ тетĕн. Колхоз правлени улшăнмасан, хамăрăн шăши ĕмĕрне пурăнкаласа ирттерĕпĕр-ха,—тенĕ тепĕр ҫамрăкрах шăши

— Шиклĕ пурăннине нимĕн те ҫитмĕ. Виҫ уйăх чиперех пурăнтăмăр...

Ҫав хушăра вулав ҫурт алăкĕ йар уҫăлса кайнă. Колхоз председателĕпе кладовщчик пырса кĕнĕ. Ырашĕ, алăка уҫсан та, йухса анман. Тырă, шăннă лапра пек, хытса ларнă. Кладовщчик кĕреҫе тытса ыраша чавса катăкăн-катăкăн уйăрма тытăннă...

— Пирĕн пĕн ҫакна та шеллеҫҫĕ,—шăппăн каласа йанă кĕтессе пытанса ларнă скептик-шăши.— Колхозниксене валеҫсе паратпăр, теҫҫĕ. Ҫавна ҫиме колхозниксем епĕр мар вĕт.

— Ан шарла! Йĕкехӳресем илтĕҫ.

— Мĕнле йĕкехӳресем?

— Ав ҫавсем. Канцеляри йĕкехӳрисем. Виҫĕ уйăх ытла канцелярире ларса, хăйсен тырри мĕнлине пĕрре те килсе пăхма вăхăт „тупайман“ етемсем,—тенĕ.

## Ҫăкăр ҫиме пĕлекенсем

Авал пĕр етемрен ыйтнă:

— Ҫăкăр ҫиме пĕлетĕн-и?

— Пĕлетĕп,—тенĕ лешĕ.

— Тата мĕн тума пĕлетĕн?—татах ыйтнă унтан.

— Тултарса парсан, ерех ĕҫме чухлатăп,—тенĕ лешĕ хирĕҫ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Бойевик“ колхоз коньухĕсем Воробйовпа Степанăв ҫăкăр ҫиме те, ерех ĕҫме те чухланине пĕлетпĕр, лашасем пăхма чухланине пĕлместпĕр вара. Тата вĕсем лашасене тăрантарма панă сĕлле вăрттăн сутса ерех ĕҫме чухланине май мар лайăх пĕлетпĕр.

Вăрланă сысна ҫӳри хăлхара ҫуйăхат, теҫҫĕ; ерех пулса хырăма кĕнĕ сĕлĕ, ҫуйăхас ҫук, калчана кайса, хырăм тирне шăтарса тухĕ кăна.

## Чăхăран ĕне

Акăлчан ваттисем:

— Ҫĕр кроликран та пĕр лаша туса йараймăн, тенĕ.

Трак районĕнчи Чатукасси йалсовет ҫекретарĕ П. Романăвăн лаша тума 100 мар, пĕр кролик та ҫук. Ҫавăнпа нумай кроликсенчен лаша туса аппаланса пăхас, темен вăл. Нумай кролик ырăнне, пĕр чăхха тытнă та, никам кĕтмен ҫĕртенех, унтан ĕне туса хунă. Тепĕр майлă каласан, аш хатĕрлевĕ йенĕпе чăхă ашĕ панă квитанци ҫине, „ĕне панă“ тесе ҫырса го ударствăна улталаса ытлашши укҫа илнĕ. Татах тепĕр майлă (ырăс ваттисем майлă) каласан: совĕҫне атă кĕлли айне, намăсне атă тĕпĕ айне хунă.

## Пулăҫăсем

Пулăҫă пулла ҫӳрет, теҫҫĕ, анчах Канаш районĕн Мăкăр йалĕнчи пулăҫăсем пулла ҫӳремеҫҫĕ, мĕншĕн тесен пулă пурăнакан кӳлĕ шывне колхоз правленийĕ, тасатас тесе, уҫса йухтарса йанă та, шывĕ такана ҫинчи пек анчах тăрса йулнă. Пуллисем пĕтнĕ. Пулăсем пурăннă ырăна пĕлтĕр кĕр умĕн шапа курăкĕ сырса илнĕҫҫĕ. Ҫав пулă кӳллине йурăхсăра кăларнăшăн колхозниксем пайан кун та тек ӳпкелесе ҫӳреҫҫĕ колхоз правлени адрĕсĕпе. Типĕ пулă кӳлли ҫурхи шывпа тулĕ вăхăтлăха, анчах колхозниксен пулă ҫийес кăмăлне тултарма правленин пайан ыранах ҫав кӳлле йĕркене кӳртмеле.

## Сĕвек кĕперри

Вуник арман хушшине вуник пăрăс хутăмăр, вуник пăрăс хушшине йасран кĕпер хыврăмăр, тенĕ йурăра. Тутаркас районĕнчи Йакаткасси йалсовечĕ, вуник пăрăс хушшине йасран кĕпер хывма мар, начар кĕпере те йусаттарма шутламаст.

Йалсовет председателĕ пĕрре ҫурхи ҫăмăр хыҫҫăн пĕлĕт ҫинче сĕвек (асамат) кĕперри пулса тăнине курах кайнă, тет те, хăйĕн ҫекретарне йăхăрса илсе, ҫапла калаҫса илнĕ, тет:

— Пăх-ха сĕвек кĕперри пулнă! Мĕнле аван кĕпер вăл: никам та туман ăна, хăйех пулнă. Никам тумасăрах пулакан кĕперсене йурататăп епĕ, тенĕ.

## Любимăв ӳпкевĕ

Трак районĕнчи Мăн Шетмĕ йалпо председателĕ Б. Д. Любимăв хăйĕн шутсăр ҫывăх йулташĕпе ак ҫапла калаҫса ларнине илтрĕмĕр:

— „Есĕ кунĕ-кунĕпе ерех ĕҫсе ҫӳретĕн, йалпо лапкинчи чи кирлĕрех таварсене хăвна ерех ĕҫтерекенсене ҫеҫ валеҫетĕн“, теҫҫĕ вĕсем. Тĕлĕнмеле. Хăвна сума суса ерех ĕҫтерекен, ырă тăвакан ҫынсене мĕншĕн парас мар-ха таварсем?..

„Ёсе чи дефицитлӑ таварсене унччен рех ревизи комиҫҫин председателӗ пулнӑ Бурдаҫ Кӗҫтукне парса тӑран“, теҫҫӗ мана. Тӳррипех калатӑп— урӑхла нимӗн тума та майӗ ҫук вӑл ҫынпа. Вӑл ревизи комиҫҫин председателӗ пулнӑ чух манӑн пур „айван“ йенсене пӗлсе ҫитнӗ те, ӑна хӑй илес тенӗ таварсене складранах парса йамасан, инкек сиксе тухма пултарать. Вӑл етем тӗленмеле вӑрӑм жалӑбӑсем ҫырма йуратаканскер. Иртнӗ уйӑхра коҫтум паманшӑнах, Райвнутторга ура тӑли тӑршшӗ жалӑбӑ ҫырса йачӗ. Ун хыҫҫӑн та чуть ҫеҫ вырӑнтан тухса ӳкмерӗм. Ҫавӑнпа ку айӑпа айӑп мар тесе шутлатӑп епӗ.

Вӑл ҫеҫ те мар. Мана—ӳсӗр вӑхӑтра есӗ йалпо лапки умӗнче выртакан пичӗкесемпе йешчӗксене ҫапа-ҫапа ҫӗмӗретӗн, теҫҫӗ. Йалпо уйрӑмӗсен продавецӗсене, пекара, правленире ӗҫлеме хӑвна ерех ӗҫтерекен ҫынсене лартса тухнӑ. Продавецсем, йе закупщик растратӑ тусан, есӗ вӗсенчен ерех ӗҫен те, растраттисене расхода списать тӑван, теҫҫӗ. Веҫӗ-хӗррисӗр айӑп... Хӑлхунтан ҫеҫ калатӑп: епӗ нервни ҫын, мана ытлашши айӑплама йурамасть, шӑнӑр туртма, йе чӗмере пулма пултарать... терӗ.

## Мӗн савӑнтарать

Ҫуркунненӗн чи илемлӗ вӑхӑчӗ килсе ҫитнӗшӗн пуринчен те ытларах Вӑрман Тӑванти (Ҫӗмӗрле районӗ) „Самоҁот“ колхоз коҥухӗсем савӑнаҫҫӗ. Мӗншӗн тесен лашасем шӑварма вӑлашка-витре таврашсем пама ыйтсан, правлени вӗсене хӗллехи кунсенче ҫапла каласа ӑсаткаланӑ: Епӗр витре тумастпӑрҫке. Есӗр коҥух, кирек-йепле шӑварӑр,' хӑть ҫӗлӗкӳсене шыв тултарса ӗҫтерӗр, тенӗ. Халӗ ӗнтӗ лашасем шӑварма ҫӗлӗк кирлӗ мар. Ҫырмана хӑваласа ансан, ҫӗлӗкпе шыв тултарса йӑтса памасӑрах, лашасене шӑварма пулать.

## Мункуна уйавлама пӑрахман етем




— Тухтӑр йулташӑм, ҫак ҫӳҫ пӗрчисем тӑрӑх мункун ӗҫкинче мана ӳсӗрскере кам хӗненине пӗлеймӗн-ши?

# Ачасен  страници

## Кăски-кушак пӳрчĕ

Пурăннă, тет, асанне,
Унăн кăски пулнă, тет.
Аҫа кушак Ваҫкă тус
Пӳрт тăррине ларнă та
Меуклатса йурласа
Кăскийе шав астарнă.

Сикнĕ кĕнĕ Ваҫкă тус
Асаннейĕн кив пӳртне;
Ҫавăтнă вăл кăскийе,
Йлсе кайнă хăй патне.

Меукки те мйаукки!
Ваҫки те ҫук, кăски те.
Асаннейĕн мĕн латти,—
Тирпей те ҫук, йĕрки те...

Кăскипеле Ваҫкă тус
Пĕр кив пӳрте вырнаҫнă...
Ваҫкă тусĕ час-часах
Килтен тухса ҫӳренĕ.
Кăски йалан килĕнче
Тунсăхласа кун каҫнă,
Сĕт пăттийĕ пĕҫернĕ.

Пĕҫернĕ вăл, пĕҫернĕ
Ытлашши вут хутнипе
Ҫурт ҫине хĕм ӳкернĕ,
Хыпса илнĕ пĕтĕм пӳрт.
Танлаттарса чан ҫапат,
Пушар патне йыхăрат.

Тан! Тан! танлатат,
Кушак пӳрчĕ йалкăшат.

Сикрĕ тухрĕ качака,
Чармакларĕ куҫ-пуҫа
Мекекек те текелет,—
Вут сӳнтерме пĕлеймест.

Тан! Тан! танлатат,
Кушак пӳрчĕ йалкăшат.

Сикрĕ пычĕ мулкачă,
Ҫулҫă хыпнă ҫăварне,
Хăлхисене выљатат,
Вут сӳнтерме пĕлеймест.

Тан! Тан! танлатат,
Кушак пӳрчĕ йалкăшат.

Сармантейĕн сар чăххи
Пĕр витре шыв илчĕ те,
Чупа пачĕ сӳнтерме.
Лапăстатса чупнипе
Шывне тăкса пĕтерчĕ.

Тан! Тан! танлатат,
Кушак пӳрчĕ йалкăшат.

Нарттин-нарттин кăвакал
Пĕр кашăк шыв илчĕ те
Лаплаттарса тухрĕ, тет,
Шывне тăкса йачĕ, тет.

Тан! Тан! танлатат,
Пушар патне йыхăрат.

Чупат кăски чӳлмекпе,
Сӳнтересшĕн сĕтпеле.
Сĕт чӳлмекне кăски тус
Ӳкерчĕ те ҫĕмĕрчĕ.

Тан! Тан! танлатат.
Кăски йĕрет, ахлатат.

Ҫурчĕ ҫунсах пĕтрĕ, тет.
Ҫакăн хыҫҫăн кăски тус
Асаннейĕн кив пӳртнех
Таврăнчĕ, тет, пурăнма.

**Н. Ваҫанкка**—куҫарса ҫырнă.

## Ачин ачи

Карчăкпала старик пурăннă. Ачин ачи пулнă вĕсен. Варвари йатлă. Карчăкпа старик Варвариреи ăслă, вĕреннĕ ҫын тăвасшăн пулнă. Ҫавăнпа вĕренме йанă ăна.

Вĕреннĕ, вĕреннĕ Варвари. Темиҫе ҫул вĕренсен, пĕрехинче вăл шутсăр савăнса таврăннă. Аслашшĕпе асламăшĕ патне чупса пынă та ҫапла каланă:

— Шкултан вĕренсе тухрăм ĕнтĕ. Вĕренсе пĕтерни ҫинчен ҫырнă ҫвидетĕлства та ак, алăмрах,—тенĕ.

Ҫакна илтсен аслашшĕпе асламăшĕ савăнмалипех савăннă. Варварийе тутлă апатсем, кӳчченеҫсем илсе панă. Пĕрехинче старик Варварирен ыйтнă:

— Кала-ха, ачамккă,—тенĕ,—хăш патшалăхра, хăш государствăра ларат Лиссабон?

Тата карчăкĕ ыйтнă:

— Йавă, Суматрă, Борнео, Целебес утравĕсем ăҫтине карттă ҫинче кăтарт-ха?—тенĕ.

Карттă умне пырса тăнă Варвари. Лиссабон ăҫтине те, утравсем ăҫтине те пĕлмен.

Варвари пĕлменнине кура, аслашшĕ те, асламăш те йĕрсе йанă. Варвари вĕсене лăплантарса ҫапла каланă:

— Отметкăсем „отлично" ман. Ҫапах кирлĕ чухлĕ пĕлместĕп мĕн еп. Отметкă ҫине шаннипе, намăс курмала пулчĕ сирĕн умăрта. Ан хуйхăрсамăрах, асаттемпе асаннем! Тытăнăп та ак, географийе май мар аван пĕлекен пулăп. Хам тĕлĕн вĕреннĕ чухне, мана, „отлично" отметкăсемпе улталаса, пăсакансем пулмĕҫ, тенĕ.

## Пулас екзаменра

— Ишрĕм-ишрĕм пайан епĕ.
— Ăçта?
— Екзамента. Арифметикăпа.
— Ишсен-ишсен мĕн пулчĕ?
— Путарчĕç.

## Çутта тухан

— Анне, мана та хăвăнни пек пĕкечелĕ куçлăх илсе пар-ха?
— Ан васка, ывăлăм, ан васка, есĕ хаљ 6 çулта кăна-ха. Ак килес çул аçу илсе парĕ.
— А куçлăхĕ санăнни пекех хăлхаран кăкарса йамалли пулаĭ-и анне?
— Ун пек мар. Вăл куçлăхăн йачĕ „Буквар" пулаĭ. Ун витĕр пăхсассăн есĕ çутта тухатăн.

Арк. Неçтерăв.

## „Сармантейăн сар чăххи" майлă

Сапожникăв ўкерчĕкĕ



Пулăçсойузăн пулăçи çăртан пулă тытнă, тет. Ăна вăл канцељярине илсе пынă, тет те, председателĕ те илесшĕн, тет, заместителĕ те илесшĕн, тет, çекретарĕ те илесшĕн, тет. Аслă бухгалтĕрĕ те илесшĕн, тет, аслă мар бухгалтĕрĕ те илесшĕн, тет. Машинисткăсем те, деловочĕсемпе счетовочĕсем те илесшĕнех, тет. Çак асăннă етемсем пекех, Шупашкар çыннисем те, типĕ тата тăварлă пулăсăр пуçне, чĕрĕ пулă çийесшĕн, тет; çавна кура, пулăçă вĕсене хирĕç çапла каласа хунă, тет: ку пулă хама çиме те сахалрах, тенĕ, тет.

# Кулас килет



## Фашис кӗлли

Фашис хӑй ачине турра кӗлтума вӗрентет.

— Ак ҫапла каласа пуҫҫапас пулат̆, ывӑлӑм: ей, ҫӳлти аттемӗр, арийҫӑсен йачӗ хисеплентӗр, пайан пурӑнмалӑх тупӑсем пар пире...

— Тупӑсемпе мӗн тӑвас, атте? Тупӑсӑр пурӑнма пулат̆, ҫӑкӑрсӑр пурӑнма ҫук, тенине илтнӗ епӗ.

— Йӑнӑш илтнӗ есӗ. Ҫӑкӑрсӑр, пурӑнма пулат̆, тупӑсӑр пурӑнаймӑпӑр.

## Тӗне хирӗҫле, анчах ӗҫкӗ майлӑ ҫын

— Раштава хирӗҫ кунсенче ӗҫрӗм. Ҫӑварниййе хирӗҫ кунсенче ӗҫрӗм. Мункуна хирӗҫ кунсенче ӗҫрӗм. Унтан Троицӑна хирӗҫ кунсем ҫитӗҫ, каллех ӗҫмеле пулат̆. Хӑҫан пӗтӗҫши ун пек праҫнике хирӗҫ кунсем. Ӗҫкӗпех пӗтес пулат̆.

## Йетӗрне районӗнчи Алексейӗвкӑра

— Пирӗн лашасем ҫуракинче ма начар пулчӗҫ? Ҫуракине тухас умӗн вӗсене канма уййӑха йахӑн вӑхӑт патӑмӑрҫке!

— Вӑхӑт панипех сахал пулнӑ пулас. Вӑхӑтпа пӗрлех утӑ та, сӗлӗ те памала пулнӑ пулас.

## Месткомсем суйласа йама пӗлменни

— Пӗлместӗп, хӑш курорта кайса килем-ши кӑҫал?

— Епӗ пӗлтӗр пулнӑ курорта кай. Унта пурӑнма сана кичем пулмӗ, мӗншӗн тесен пӗрремӗшӗ... вӑл курорта чирлисем шутсӑр нумай, иккӗмӗш.. чирлисем пурте май мар сыввисем.

## Йапӑх прикашчик

— Ку ҫӗҫӗпе есӗ халӗ ҫеҫ пӗр хӗрарӑма супӑн̆ касса патӑн. Халӗ ҫав ҫӗҫӗпех мана кӑлбасси касса паратӑн.

— Супӑн̆ каснӑ чухне тасалнӑ вӑл, кирек мӗнле йапала та супӑн̆па тасалат̆.

## Строителствӑ опычӗ

— Ача ҫурагмали ҫурт ҫмети пысӑках марҫке!

— Ӳсеймен хал̆. Ҫуртне тума тытӑнсан, хӑйех ӳсӗ.

## Суйа отчотсем тӑратакан

— Канашпа Шупашкар хушшинче чукун ҫул ӗҫлеме тытӑнат̆. Май ҫук аван пулат̆.

— Аванни аван та...

— Мӗн тата?

— Ӗлӗк командировкӑ йӗркипе Трак йе Ишлей районне каймала пулсан, лашапах кайатпӑрчӗ. Халӗ ирӗксӗрех пуйӑспа каймала пулат̆.

— Пуйӑспа начар-им вара?

— Начарах мар та .

— Мӗн тата?

— Лашапа ҫӳренӗ чухне, пӗлетӗн ӗнтӗ, ҫул укҫи мӗн чухлӗ тухнине кӑтартакан роҫпискӑсене мӗнле ҫыркаласа алпустарнине. Халӗ ҫул укҫи ун пек роҫпискӑсем тӑрӑх мар, таксӑ тӑрӑх тӳлеме тытӑнӗҫ...

## Йерҫеймест

— Инструктӑр йулташ, шутсӑр ӗҫ нумай! Ара вулав ҫурт пуҫлӑхӗ те епӗ, йалсовет членӗ те епӗ, йалпо правлени членӗ те епӗ, вӑрҫӑлӑ турӑсӑрсен йачейки ҫекретарӗ те епӗ, комсод членӗ те епӗ, Мопр йачейки ҫекретарӗ те епӗ...

— Чим! Ӗҫлетӗн-и вара вӗсенче?

— Ӗҫлесчӗ те, анчах хӑшӗнче ӗҫлеме пӗлес? Пӗринче ӗҫлеме тытӑнсан, тепри кӳренме пултарат̆ (кунта ӗҫлемест тесе), тепринче ӗҫлеме тытӑнас—тепри кӳренме пултарат̆. Хӑшӗнче ӗҫлесси ҫинчен шухӑшланипех вӑхӑтӑм иртсе пырат̆.

## Чиркӳ ҫыннисем хушшинче

— Ҫамрӑксене чиркӳве ытларах ҫӳреттерес, тесе, тут лӑ мар, типсе ларвӑ просфирсем вырӑнне, май мар тутлӑ пирожнӑйсемпе „о здравипе" „о упокой" асӑнмала тӑвас, тетпӗр.

## Ӑнланманнипе

Хаҫатри терминсене пӗлме, колхозниксемпе шкул ачисем вал̆л̆и словар кӑлармала.

— Англи государствинче сӑран тавраш сахал пулас.

— Ӑҫтан паллӑ?

— Министрсем вал̆л̆и портфӗлсем ҫителӗксӗр вӗсен. Ак хаҫатра: „Англин портфӗлсӗр министрӗ" тенӗ. Пирӗн ун пек аслӑ вырӑнтисем мар, 10 ҫул тултарнӑ-тултарман ачасемех портфӗлсемпе ҫӳреҫҫӗ.



**Шавлă оркестăрсене лайăххрах инструментсем туйантарасчĕ.**

— Мĕн кирлĕ-ши сана, тăхлачăм?

— Сăмавар лартмалаччĕ. Упăшкам, турхупламанскер, сăмавар трубине хам кураччен çаклатса килнĕ те, вĕрмели инструмĕнт туса, ўпкине шеллемесĕрех, кĕвĕ каласа ларать.

# Халранкайпа тусĕ

Епĕ тахçан поэтсем çинчен çырнăччĕ. Хăшĕсем вăл калава çырнăшăн урра çĕклесе Шупашкарах çитерме пулчĕç, теприсем çиленнипе ĕмĕрлĕхе сывпуллашса кайрĕç. Тĕлĕнмеле вăл поет пулайман поэтсенчен: йунĕсем хуранти шыв пекех вĕри вĕсен.

Çавăн пек вĕри йунлă икĕ çамрăк Шупашкарăн пĕр урамĕнче тĕл пулчĕç.

— Е-е,-терĕ пĕри,—Халранкай!

— Куратăп куçăмпа, чĕнетĕн чĕлхемпе тутамăн тусĕ Савик сăвăçа!—ответлерĕ йулташĕ рифмăласа.

Чылайччен вĕсем калаçрĕç. Тротуар çинче çынсем ан кансĕрлеччĕр тесе, çĕнĕ çурт валĵи тийесе килнĕ кирпĕч куписем хыçнех кĕрсе ларчĕç. Кăсйинчи блок-ночĕсене кăларчĕç.

— Çитет,—терĕ калаçса ывăннă хыççăн пĕри,—таланта пытарса пурăнма. Ыранах ак „Тăвата урапалă трактăр“ поемă картлаттарма пуçлатăп.

— Ну, кларăн тăвата урапаллă. Тăвата урапалли кайа йулнă трактăр вăл. Епĕ вăн „ўпне выртнă сўре“ йатлă роман çырма пуçланă та.

— Сўре? Сўрепе мар халĵ сухалаççĕ... ав мĕнпе сухалаççĕ...

— Мĕнпе?

— Епĕ пĕлетĕп им? Агрономран ыйт, çураки тунине пăх...

— Ху пăх трактăр урапи миçине... Ху, ху..

Пуçланчĕ вĕсен харкашу. Тен хуралçă пырса чарман пулсан, вăрçсах та кайнă пулĕччĕç.

Тепĕр сехетрен çак хастарлă çамрăксене редакцинче ларнине куртăм. Литсотрудник умне ларнă та, çураки валĵи пĕр поемăпа роман пулатех, тесе калаçаççĕ.

— Кĕтетпĕр çамрăксенчен,—тет лешĕ.

Çак калаçу хыççăн Халранкай икĕ çĕр те икĕ кун çырчĕ. Çырчĕ-çырчĕ те, пĕтĕм хучĕсене çĕклесе тусĕ патне утрĕ. Савик тусĕ вăл пынă вăхăтра тăвăл кăларса çырса ларнă.

— Ай хĕрлĕ пурçăн савни! Тухмасť чунилли! Пушкинĕ те, Толстойĕ те çураки çинчен çырман, трактăр мĕнне пĕлмеççĕ, сўре сăмах çук вĕсен. Тфу, классику качку!

— Ан тарăхтар тарăхнă чуна. Манăн вăн рифмă та çук, ритăм та çук. Е-ех, çураки çывхарať...

Чылайччен хуйхăрса ларнă хыççăн иккĕшĕ те пĕр харăс сиксе тăчĕç.

— Çитет,—терĕç вĕсем,—хăйамата çураки, çыр ав Май уйавĕ çинчен, чукунçул туни çинчен...

— Çыратăп, Савик, „Хурçă сукмак“ поемă, сакăр пайлă, сакăр сыпăклă поемă.

— Пултăр çĕнĕ роман, пултăр йачĕ „Чăштик-чашт!“ Пуйăс сасси пултăр, çĕнĕ сас. У-у-ух!—сухăрчĕ вăл, пуйăс свистокĕ майлă.

Кунсем иртрĕç, уйăхсем. Çитрĕ ăшă çу. Çўлте уйăх çутатať, пахчара хĕрсем çўреççĕ. Калас пулať, чĕрене илĕртекен çулахи илем. Çак илемлĕ каçхине пахчара Халранкай тусне тĕл пулчĕ.

— Ну, поему йепле?—ыйтрĕ вăл.

— Ан шарла, ĕç тухмарĕ. Халĕ ав „Кукăр ункă“ йатлине пуçларăм. Хай „Çĕнтерў“ колхозри трактăристкă çинчен.

— Епĕ йулсах каймастăп. Киввисем çине ал сулса „Матрос“ çырма пуçларăм.

— Кам çинчен?

— Кам çинчен тата? Хай пристăнĵре ĕçлекен стаханăвĕц çинчен.

— Иурať,—килĕшрĕ тусĕ,—тĕрле çĕршер йĕрке кунне.

Чылайччен вара вĕсем хăйсен пуçĕнче татах çырмали пилĕк пин йĕрке пурри çинчен, чăваш писатĕлĕсем прологлă, епилăглă, вунă пайлă та вунă картинлă, вунă антрактлă пйесăсем çырайманни çинчен калаçса утрĕç. Пахчари хĕрсем умĕпе иртсе пынă чух мăнкăмăлланса, йури мекĕрленерех ўсĕрсе çўрерĕç, пуç çийĕнчи шĕлепкисене куç çинерех пусса лартса утрĕçĕ вĕсем.

Пĕринче манăн Атăл леш йенне шыва кĕме каймала пулчĕ. Хăйăр çинче çурăма пĕçертсе выртатăп. Манăн ура вĕçĕнчех Атăл хăйĕн вĕтĕ-вĕтĕ хумĕсемпе хумханса выртať. Çапла выртнă çĕрте манăн хăлхана тавлашса çухăрнă сасă çитсе кĕчĕ. Пăхатăп та—Халранкайпа Савик. Вĕсен калаçăвне итлес тетĕп хама-хам. Савик хĕрсе çухăрма пуçларĕ:

— Çук, роман çырнипе ĕç тухмасť. Тĕп пултăр роман!

— Тĕп пултăр поемă! Атте те, анне те, ачамăн ачи те поемă çырма ан шутлатăр,—хушса хучĕ Халранкайĕ.

Пĕтĕм тĕнчери поэтсене вăрçса тăраннă хыççăн, пĕри Толстойăн „Война и мир“ романне, тепĕри—Шота Руставелин поемине куçарма пулчĕ.

— Ку ĕçпе чап пулĕ!—терĕç иккĕшĕ те пĕр харăс.

Пурнăç малала шунă май, çураки те, кĕраки те иртрĕ, стаханăвĕцсем нормăсене икшер-виçшер хут тултарни те, чукунçула туса пĕтерни те айакка тăрса йулчĕ вĕсенчен.

Ытти писатĕлсем чукунçул çинчен, стаханăвĕцсем çинчен çырнă калавсемпе сăвăсене вуласан, лах, лах, лах кулса илчĕçĕ вĕсем.

— А, талантсăр çынсем. Пирĕнсĕрех чăваш литератури тăвасшăн. Чыслама пĕлмеççĕ пире,—тесе чылайччен елеклĕ сăмахсем сарчĕçĕ вĕсем.

**И. В.**

---

**Чехословаки çĕршывĕн пайне Полĵшă та илесшĕн ăмсанať...**

(Хаçатсенчен)




**Лаша чĕрнипеле ăçтала чавасшăн, рак та çавăнтах хĕскĕчне йарасшăн.**

# Ĕлĕкри колхозник çуртĕнче

Манăн çула май Елĕке (район центрне) кĕмеле пулчĕ. Елĕке хĕвел аначчен çитрĕм. Пустуй çĕрте выртас мар тесе (куккасем те унта çукран) колхозник çуртнех хватер ыйтма кайрăм. Колхозник çурчĕ анат вĕçне вырнаçнă. Питĕ нумай утса ывăннăскер (Шулашкартан 60 çухрăм çуран утнă вĕт!) Колхозник çуртне аран-аран çитсе тăтăм. Урасене тасаткаланă хушăра ман умĕн икĕ хутлă çурта виçĕ ача чупса кĕрсе кайрĕç. Епĕ те вăраханах пысăк та аслă çурта кĕтĕм. Ман умĕн кĕнĕ ачасем колхозник çуртĕнчи пысăк бака виççĕшĕ те, вăрăм çўçлĕ пуçĕсене чикнĕ те, тем тăваççĕ.

— Мĕн тăватăр, ачасем?—ыйтрăм епĕ.

— Шыв ĕçетпĕр,—ăнсăртран ыйтнă пирки чыхăнса кайса ответлерĕç ачасем пурте харăссăн.

Чăнах та вĕсем шыв ĕçеççĕ мĕн.

— Кунта пурте шыва куркасăрах ĕçеççĕ-и?—тĕлĕнсе ыйтрăм епĕ.

— Епĕр кăна мар, ĕнер пĕр ватă, вăрăм шур сухаллă старик те пирĕн пекех ĕçрĕ,—терĕ ачасенчен пĕри.

Нимĕн хирĕç калама пĕлмесĕр директăр патне кĕтĕм. Директăртан, чылай тархасланă хыççăн, пĕр каç выртма ирĕк илтĕм.

Каç пулсан, питĕ хытă ĕшеннĕскер, кинона каймасăрах тепĕр йулташпа иккĕн çывăрма выртрăмăр.

Питĕ тарăн, ăшă ыйăха кайнăччĕ кăна—çурăм çав тери хытă пĕçерсе кайрĕ. Мĕн пулчех тесе, алăма çурăм çине йарах патăм—пĕр пилĕк-ултă хĕрлĕ хăнкăла алăма кĕрсе кайрĕç. Йунашар выртакан йулташ та ăшă ыйхăран питĕ йăвăррăн кăшкăрса йачĕ.

— Ак, шуйтансем!—хулĕ çинчен шăлса пăрахрĕ хăнкăласене. Унăнне çур хулне хĕп-хĕрлĕ йунах тунă хăнкăласем.

— Çийĕр тăраниччен, тăрансан пăрахăр-и мана çыртма,—тесе йулташ майкине хывса кроват çумне çакрĕ.—Мĕн килекенне веçех вĕлеретĕп. Чăнах та вăл мĕн курнă хăнкăлана майкăпа çунтарма тытăнчĕ.

— Ку тарана çывăрманна, тек çывăрмастăп,—терĕ йулташ.

Чылай çывăрас шухăшпа выртнă хыççăн тĕлĕрсе кайнă епĕ.

— Пĕтрĕн вĕт, тăр хăвăртрах!—кăшкăрчĕ хайхи йулташ. Нимне пĕлмесĕр епĕ килте çывăрнă чухнехи пек, анне вăратат пулĕ тесе, вăранса кайрăм.

— Мĕн ара, анне?—ыйтрăм епĕ..

— Аннў килте-ха, йулташăм, малтан хăнкăла „аннўсемпе" калаç-ха,—кулчĕ йулташ.

Манăн кĕпене çўлеле таварса хурса аллипе çурăма шăлса илсе кăтартрĕ. Чутах кайала кайса ўкетĕмчĕ. Хĕп-хĕрлĕ йун. Çурăм чăтма çук пĕçерсе ыратат. Часах тумланса, кило туртакан чăматана йатса, тул çутăлнă-çутăлманах пуђницăна чупрăм. Елĕке пырса курнă çынсем пĕлеççĕ пулĕ—пуђницă колхозник çурчĕпе йунашарах, анат йенче ларат. Хăвăртрах пуђницă алăк умне çитсе таккама тытăнтăм.

— Кам унта?—ыйтрĕ тухтăр.

— Уç хăвăртрах.

Тухтăр, хађ кăна ăшă ыйхăран ăнсăртран тăнăскер, шур йĕмсемпе мана хирĕç тухса тăчĕ.

— Мĕнле чир çакă?—хăвăртрах çурăма çаварса кĕпене таварса кăтартрăм тухтăра.

— Кĕçĕ,—терĕ ыйхă тĕлĕшĕпе тухтăр, мана кĕçĕ емелĕ часах вăл тыттарса йачĕ. Усси пулас çуккине пĕлсе пĕр хут та сĕрмерĕм вăл емеле. Ак пайан та—çурăма чўрече сулли çумне тĕксе хыçса ларса, аран-аран калава çырса пĕтертĕм.

Алексçейĕв—Усман.

# Кахал такмакĕ



Ĕçлемесĕр, ним тумасăр
Манăн тăранасчĕ,
Пурлăхлă пуласчĕ,
Капăр тумланасчĕ.

Кунĕн-çĕрĕн ним канмасăр
Канлĕн çывăрасчĕ.
Алсене хыçа йамасăр
Ĕнсене хыçасчĕ...

А. П. ЧЕХӐВ

# Лашала хушамат

Булдайӗв хушаматлӑ отставной генерал-майор шӑлпа аптранӑ. Ҫӑвар ӑшчикине ерехпе, коньякпа чӳхесе аппаланнӑ вӑл, суракан шӑлне чӗлӗм лаприпе, опийпе, скипидарпа, краҫҫинпа тытса та пӑхнӑ, питҫӑмартине йодӑ сӗрсе лартнӑ, хӑлха шӑтӑкӗсене ҫпирта чиксе йӗпетнӗ мамӑкпа питӗрнӗ, ҫапах ҫаксем йе ним пулӑшман йе ӑша йӗклентернӗ. Тухтӑр пырса кайнӑ. Шӑла вӑл чаваласа пӑхнӑ, хинӑ ҫырса панӑ, пулӑшу ҫав-ҫавах пулман. Суракан шӑла кӑкласа пӑрахма сӗннине генерал йышӑнман. Килӗшсем—арӑмӗ, ача-пӑчи, тарҫи-тӗрҫи, пӗчӗк повӑр Петкӑ качкипех кашнийех ӑна хӑй пӗлнӗ имҫампа усӑ курса пӑхма сӗнеҫҫӗ. Булдайӗв прикащчикӗ Иван Йевҫейӗич та ыттисем хыҫҫӑн ун патне пырса, ӑна чӗлхе вӗртерсе сипленме ӑс парса пӑхать.

— Лере, вунӑ ҫул кайарах,—тет вӑл,—акцизнӑй Йакков Ваҫилчӑ пурӑнатчӗ. Шӑл сурнине чӗлхе вӗрсе сиплетчӗ—пит селӗм. Чӳрече йенеле ҫавӑрӑнса тӑратчӗ те, пӑшӑлтаткаласа илетчӗ, суркалатчӗ, шӑл ыратни вара лӑштӑрах пулатчӗ. Ҫавӑн пек хӑват пур унӑн.

— Халӗ ӑҫта вӑл?

— Ара акцизнӑйран кӑларса йанӑран вара хуҫамӗш патӗнче Саратӑвра пурӑнать. Шӑлпах пырне халь тӑрантарать. Ехер камӑн шӑлӗ ыратать пулсан, ун патне килне пырать, сиплесе парать. Саратӑврисене килӗнче хӑй патӗнче имлет, йут хуларисене вара—телеграф тӑрӑх. Ун патне телеграм йарӑр, ваше превосходителствӑ, ҫапла, ҫапла, тейӗр, турӑ чури Алексейӑн шӑлӗ сурать, пулӑшма ыйтатӑп, тейӗр. Сипленӗ укҫине вара почтӑпа йарӑн.

— Ан лӗпӗртет! Ултав ку!

— Сӑнамашкӑн йарса пӑхӑрах ӗнтӗ, ваше превосходителствӑ! Ерех тесен каҫсах кайать, хӑй, арӑмӗпе мар, немкӑпа пурӑнать, йатлаҫаканскер, ҫапах тӗлӗнмеле хӑватсем тавакан теме пулать ӑна.

— Йарса пӑхсам, Альошӑ!—йӑлӑнма тытӑнать генералҫӑ.—Есӗ вӗрӳҫе ӗненместӗн ак, еп хам сӑнаса курнӑ вара. Ху ӗненместӗн пулин те, ма йарса пӑхас мар вара? Аллу хӑрса лармӗҫке унщӑн.

— Е, йурӗске!—килӗшет Булдайӗв.—Кун пекех ыратсассӑн, акцизнӑй патне мар, шуйттан патне те телеграм парӑн... Ай-йой! Халӑм йулмарӗ. Ӑҫта пурӑнать вара сан акцизнӑйу? Ун патне мӗнле ҫырмала?

— Ӑна Саратӑвра кашни йӑтӑ-качка пӗлет,—тет прикащчик.— Ваше правосходителствӑ, аплатӑк Саратӑв хулине ҫырма кӑмӑл тавӑр. Его благороди господин Йакков Ваҫилйича... Ваҫилйича...

— Вара.

— Ваҫилйича... Йакков Ваҫилйича... хушамачӗпе каласассӑн... Хушаматне маннӑ иккен... Ваҫилйича... Шуйттан... Хушамачӗ мӗнлечӗ-ха. Паҫӑр кунта килнӗ чухне астӑвапчӗ... тӑхта-ха...—Иван Йевҫейӗич куҫӗсене мачанала пӑхтарса, тута хӗррисемпе пӑш-пӑш-пӑш тума тытӑнать. Булдайӗвпа генералҫӑ каҫса кайса кӗтеҫҫӗ.

— Ну, мӗнле ӗнтӗ? Йӑпӑртрах шухӑшла!

— Кӗҫех... Ваҫилйича... Йакков Васильйича... Асран кайнӑ. Калкал хушаматчӗ те... Лашала хушаматчӗ пек астӑватӑп. Кобылинчи-ха? Ҫук, Кобылин мар... Тӑхта-ха... Жеребцов мар-и? Ҫук, Жеребцов та мар. Хушамачӗ лаша майлине астӑватӑп, анчах мӗнли—пуҫран панклатса тухнӑ.

— Жеребйатников-и?

— Никак ҫук. Тӑхта-ха... Кобылицин... Кобыльатникӑв... Кобелӗв...

— Кобелӗв. Кобел тесе аҫа йытта калаҫҫӗ-ха. Апла вара лашала мар, йытӑла хушамат пулать. Жеребчиков и?

— Ҫук, Жеребчиков та мар... Лошадинин... Лошаков... Жеребкин... Капла та мар.

— Ну, мӗнле ҫырас-ха манӑн? Ху шухӑшласа пӑх-ха ара!

— Халех... Лошадкин... Кобылкин... Коренной...

— Коренников-и?—ыйтрӗ генералҫшӑ.

— Никак ҫук. Присҭажкин... Ҫук апла та мар. Маннӑ.

— Мантӑн пулсан мӗншӗн вара есӗ, вилӳ карӑнманскер, ӑс пама кӗрӗшрӗн!—ҫиленчӗ генерал.—Тухса кай кунтан!

Иван Йевҫеич мӗшӗлтетсе тухать, генералӗ хӑйне питҫӑмартинчен йарса тытса пӳлӗмӗсем тӑрӑх кускаласа ҫӳреме тытӑнать.

Прикащчик сата тухать те, куҫӗсене пӗлӗтеле йарса, акцизнӑйӑн хушаматне аса илмехленсе ҫӳрет.

— Жеребчиков... Жеребковски .. Жеребенко... ҫук апла мар. Лошадински .. Лошадевич... Жеребкович... Кобыльански...

Кӑшт тӑхтасан, улпут патне чӗнсе илеҫҫӗ ӑна.

— Аса илтӗн-и?—ыйтать генерал.

— Никак ҫук, вашӗ превосходителствӑ!

— Тен. Коньавски пуль? Лошадникӑв? Ҫук-и?

Килӗнчисем те, пурте пӗрне пӗри пӳлсех хушаматсем ӑслӑласа кӑларма тытӑнаҫҫӗ. Лашасен йачӗсене ватӑ-ҫамрӑк, арлӑхпа ӑратлӑх тӗлӗшӗнчен пӗтӗмпех шута илсе тухаҫҫӗ, ҫилхисене, ура чӗрнисене, кӳлмели таврашсене астуса пӑхаҫҫӗ. Улпут пурӑннӑ ҫуртра, сат пахчинче, тарҫӑ-тӗрҫӗсем пурӑннӑ пӳртре, кухнинче ҫынсем кӗтесрен кӗтеселе утса ҫӳреҫҫӗ, хушамат шыраҫҫӗ...

Прикащчика пӗр майах пӳрте кӗме хушса йараҫҫӗ.

— Табунов-и?—ыйтаҫҫӗ унран. — Копытин-и? Жеребовски-и?

— Никак ҫук,—тет те хирӗҫ Иван Йевҫеич, куҫӗсене ҫӳлеле пӑхтарса каллех хытӑ сасӑпа шухӑшлама тытӑнса кайать.—Коненко... Конченко... Жеребейӗв...Кобылейӗв...

— Атте!—ҫуйӑхса йани илтӗнет ача-пӑча пӳлӗмӗнчен.—Тройкин-и? Уздечкин-и?

Пӗтӗм усатбӑ йӑшӑлтатса кайать. Тертленсе пӗтнӗ, чӑтӑмсӑр генерал кирлӗ хушамат тупаканнине пилӗк тенкӗ укҫа пама пулать, вара ҫынсем Иван Йевҫеич хыҫҫӑн пулкки-пулккипе ҫӳреме тытӑнаҫҫӗ.

— Гнедов!—теҫҫӗ ӑна.—Рысистый! Лошадицки!

Каҫ та пулса ларать, хушамат ҫав-ҫавах тупӑнмасть. Телеграм йамасӑрах ҫывӑрма выртаҫҫӗ вара.

Генерал çĕрĕпе çывăрмасть, кĕтесрен кĕтеселе утса çÿрет, йăнăша-йăнăша илет... Ирхине виççĕмĕш сехетре килĕнчен тухать те, прикашчик чÿречинчен пырса шаккать.

— Меринăв мар-и?—йĕресле ыйтать вăл.

— Çук, Меринăв мар, ваше превосходителства,—хирĕç тавăрса калать те, айăплă çын пек йăвăрăн сывласа йарать Иван Иевçеич.

— Тен хушамачĕ лашала мар, мĕнле те пулин урăхларах тăр.

— Чăнах, ваше превосходителства, лашала... Шутсăр лайăх астăватăп.

— Мĕнле есĕ манчăк етем пулнă, ачам!.. Вăл хушамат маншăн халĕ тĕнчере чи хакли пулать. Муталанса пĕтрĕм —Ирхине генерал каллех тухтăр патне йарса килтерет.

— Тăпăлтарса пăрахин ара,—ăс тытать вăл.—Текех чăтма çук.

Тухтăрĕ пырать, суракан шăла нăтăртах кăкласа пăрахать, генералĕ лăпсăрах кайать. Хăй ĕçне пĕтерсе, ĕçленĕшĕн мĕн тивĕçлине илсен, тухтăр çемçе урапи çине ларса килнеле йурттарать. Пус хапхин тепĕр йенче уйра Иван Йевçеича тĕл пулать вăл... Прикашчик çул хĕрне тăнă та, ури айнеле тинкерсе пăхса, тем çинчен шухăшласа асаплана. Çамки тирне картлантаракан йĕрсемпе кусĕсенчен унăн шутсăр тимлĕ, асаплă шухăшсем пулни курăнать.

— Буланăв... Чересседелникăв... — мăкăртатса тăрать вăл.—Засупонин... Лошадски...

— Иван Иевçеич!—тесе сăмах хушать ăна тухтăр...—Санран пĕр пилĕк виçе сĕлĕ илме пулмĕши, ачамкка? Хамăран мужиксемех мана сутаççĕ те, сĕлли майсăр начар-çке...

Тухтăр çинеле кăн пăхса илет, Иван Йевçеич, темĕнле нĕрсĕр йелпĕрсе кулса илет, унтан сăмах шарламасăр, аллисене шарт çапса йарса, урнă йытăран тарнă пекех усатăпа йенеле тапса сикет.

Вĕрхĕнтерсе генерал кабинетне пырса кĕрсе, хайшĕн йут сасăпа:

— Шухăшласа тупрăм, ваше превосходителства!—тесе кăшкăрса йарать савăнса.—Турă ыр сывлăх патăр тухтăра, шухăшласа тупрăм. Овсов! Акцизнăйăн хушамачĕ Овсов! Овсов, ваше превосходителства! Телеграм Овсов патне йамала.

— Ме сана!—тет генерал йĕрĕнсе, икĕ чăмăрĕ пÿрнисем хушшинчен икĕ мăлкач туса кăтартса унăн пичĕ умне илсе пырса.—Мана санăн лашала хушамату текех кирлĕ мар. Ме сана!

**Мами куçарнă.**

□ □ □

## Чăрмавлă пассажир

Епĕ Куйбышĕвра, шофĕр пулса, ĕçлетĕп.

Пĕррехинче командировкăран таврăнакан çынна аеродроман хулана лартса кайма тивре. Çĕрле. Вăл каланă адрĕс тăрăх Чапайĕв плошчĕдне пырса çитсе урам кĕтессине чарăнтăм.

— Ак çитрĕмĕр те,— тетĕп епĕ хамăн пассажира савăнтарас шутпа.—Арăмупа ачусем кĕтсе ывăнчĕç пулĕ ĕнтĕ... Таçтан тутлă икерчĕ шăрши кĕрет пек. Сирĕн хваттертенех мар-ши вăл?

Хайхи етем ман такси алăкĕнчен пуçне кăларса йĕритавра пăхкаларĕ те, таçта инçе çула кайма хатĕрленнĕ çын пек, тата çирĕпрехкĕн вырнаçса ларчĕ.

— Ан шÿт туса лар,—тет мана хайхискер темĕнле кичемлене пуçланă сасăпа.—Йурттар малала. Часрах киле çитес.

— Мĕнле „йурттар малала?"—тетĕп хайхискер епĕ, пăртак тарăхма пуçласа. — Есĕр Чапайĕв плошчĕдне илсе кайма хушрăр и?

— Çавăнта,—тет.

— 120-мĕш №-лĕ çурт тĕрĕр-и?

— Çапла!

— Апла пулсан—анăр,—тетĕп хайхискере.—Пурте тĕрĕс. Шăп çеç есĕр каланă çурт умне çитсе чарăннă епĕр.

Халĕ ĕнтĕ манăн пассажир чĕрре кĕме пуçларĕ:

— Епĕ хамăн хваттер ăçтине пĕлместĕп-и мĕн? Кунта мĕнле çуртсем капланса лараççĕ,—тет вăл такси кантăкĕ витĕр çĕнĕрен туса лартнă вуншар хутлă икĕ çурт çине кăтартса. — Ман хваттер патĕнче кун пек çуртсем çук.

— Унтан нимĕн тĕлĕнмели те çук,—тетĕп епĕ.—Вĕсене хулана реконструкцилес тĕлĕшпе есĕр командировкăра çÿренĕ вăхăтра, ултă уйăх хушшинче туса лартнă.

Çапла майпа, пĕр çур сехет хушши пек ÿкĕтленĕ хыççăн, аран-аран антарса хăвартăм çак чăрмавлă пассажира. **Сухари Матаксем.**

## Сĕмсĕр сысна

Мартăн 14-мĕшĕнче Совет Сойузĕн Хĕвелтухăçĕнчи чикки урлă йутçĕршыв салтакĕсем каçса малала кусса пынă. Совет пограничникĕсем çине пăшалпа тата пулеметпа пенĕ. Совет пограничникĕсем пирĕн çĕршыва сĕмсĕрленсе кĕрекен бандитсене хирĕç тăнă. Кĕрешÿ питĕ вăйлă пулнă. Пирĕн икĕ пограничник 15 çынлă бандăна йăлт çĕмĕрсе тăкнă.

(„Правда" хаçатран)



Чупса пырать сысна пуйан пахча патне,
Кĕрсе çиме шутлать унти çимĕçсене,
Шăрт тăратсах хире-хире пăхать,
Анчах пулать ун ĕçĕ кăлăхах.

Хайхи сысна ним майсăр кĕвĕçет:
Кун пек пахча ниçта курман еп, тет.
Пит илĕртеççĕ çимĕçсем ăна,
Кĕресшĕнех вăл çакă пахчана.

Пуçлать чунтан мĕкĕрленме,
Хÿмесене вăйпа хирме.
Сысна нăрăхлатнине илтсе,
Пырать пахчаçă вĕçтерсе.

Пĕрех çапать вăл чукмарпа,
Сĕмсĕр сысна пуçлать тарма...
Çимĕçсене вăл çийеймен,
Килне те çитеймен.

**И. Йаковлĕв, В. Михайлăв.**

# СУЙЕҪĔ

*И. А. КРЫЛОВ*

Инçе çӳревсенчен килсен,
Темле пĕр дворйанин (кӈаçех те пулĕ тен),
Тусĕпеле уйра утkаласа çӳренĕ,
Аçта пулни çинчен тек мухтанса пупленĕ,
Чăнни çумне хисепсĕр хушнă суйине.
„Çук“, тенĕ вăл: „еп хам мĕн курнине
Нихçан кураймăп пулĕ урăх.
Мĕнле çĕршыв кунта?
Кĕç сивĕ сирĕн, кĕç пит шăрăх,
Хĕвел кĕç пытанаť, кĕç вăйлă çутатаť
пĕр тăрăх.
Унта вăт, рай чăн та!
Аса илсен ăçтан-ха савăнмастăн.
Унта ни кĕрĕк, ни çурта тупмастăн:
Нихçан пĕлместĕн каç тĕттĕммине,
Çулталăкпех йалан куратăн Май кунне.
Нихçан акмаť, лартмаť никам та,
Çапах ӳсет, пиçет йалт йантă!
Римра ак, сăмахран, еп курнăччĕ хăйар:
Ах, пархатар!
Халичченех еп хытă тĕлĕнетĕп!
Ĕненĕн-ши? Сăрт чухлĕ пур вăл, тетĕп“.
—„Ак тамаша!“—тет тусĕ хайхине:
„Тĕлĕнмели вăл тĕнчере пурах таçта та;
Анчах асăрхамаççĕ хăшĕ вĕсене.
Çитетпĕр хамăр та тĕлĕнмели патне,
Паллах, ун пеккине ес кураймăн ниçта та,
Еп куншăн хатĕр тавлашма та.
Пĕлетни, çул çинчи çав кĕпере?
Пăхма вăл чиперех,
Анчах тĕлĕнмеле хăвачĕ питĕ,
Суйеç ун урлă каçаймаť нимли те:
Вăл çывхараймĕ çуррине,
Кĕрсе те ӳкĕ шыв ăшне;
Илес суйманнине,
Вĕсем ним мар каçаççĕ кӳмепе те“.
—„А шывĕ мĕнлерех?“
—„Ăшăхах мар питех.
Асту-ха, кун пекки пулман вăл тĕнчипе те.
Тавлашмăпăр, хăť Рим хăйарĕ пысăк та-и, тен,
Сăрт чухлĕ терĕн мар-и, çав, ес ун çинчен?“
—„Унашкалах пулаймĕ те, ну пĕчĕк мар
пӳртрен“.
—„Шанмашкăн йăвăр.
Анчах ак, курăр хăвăр,
Кĕперĕ те йулмаť тĕлĕнтерес йенчен.
Ун хăмисем суйеçсене тӳсмеççĕ;
Кăçал кăна, çуркуннепе
Ӳксеччĕ ун çинчен (кулипелех пĕлеççĕ)
Ик журналис пĕр çĕвĕçпе.
Тавлашмăпăр, хăйарĕ пултăр хăť пӳрт пек,
Çапах вăл хăрушла, чăнах пулсассăн“.
— Мĕнех вара, хай каласассăн,
Йапалана пĕлеççĕ уйăрма:
Пирĕнни пек вăл пур çĕрте те керменсем-им,
Вĕт пур, пӳртсем-и:
Çиткелĕç иккĕн шăнăçма,
Унта та хĕн ларма-тăма!“
—„Пулин, çапах та, курăнаť вĕт, витĕр,
Тĕлĕнмеле тесен те çылăх мар,
Хăйар ăшне ик çын кĕрсен те çитĕ.
Анчах, кĕперĕ мĕнлерех!
Суйеçĕ пилĕк утăм тăвиччен, тӳрех
Шыва та сикĕ ыррăн!
Хăť Рим хăйарĕ сан тĕлĕнмеле“...
„Итле-ха“, тет суйеçĕ пӳлмеле:
„Каймастпăр кĕперпе, шырар пуӈ
ăшăх вырăн“.

**Н. Пиктемир куçарнă.**

# ЕЛЕКҪĔ

Ĕлĕк-авал пĕр çынăн икĕ ывăл пулнă, тет. Çак çын, ывăлĕсем çитĕнсе çитсен, икĕ ывăлне те авлантарнă, тет. Аслă ывăлĕн арăмĕ ĕçе йуратакан(с)кер пулнă, тет. Кĕçĕн ывăлĕн арăмĕ калама çук кахал хĕрарăм пулнă, тет. Аслă ывăлĕн арăмĕ ĕçленĕ-ĕçленĕ, тет, çĕрĕн-кунĕн ĕçлесе те хуӈашĕпе хуӈамĕшне йурайман, тет. Кĕçĕн ывăлĕн арăмĕ ним ĕçлемесĕрех хуӈашĕпе хуӈамăшне йурама пĕлнĕ, тет. Мĕнле йурама пĕлнĕ вăл? Акă мĕнле Унăн чĕлхи питĕ йака пулнă, тет, суйа-суйма—елеклеме питĕ ăста пулнă, тет. Çапла вара елеклесех йураса пурăннă, тет. Çав майсăр йака чĕлхелĕ, суйа суйма—елеклеме шутсăр ăста пулнă хĕрарăмăн ачин темиçе сыпăкри ачи С. А. Мокевнин ултăмĕш çул ĕнтĕ Мăн Улхашри (Çĕмĕрле районĕ) пуçламĕш шкулта заведуйушчи пулса ĕçлет.

Ултă çул хушшинче вăл елекленипе 20 учитĕле ку шкултан кăларса йанă. Унсăр пуçне елеке тӳсеймесĕр 10 учитĕл хăйсем пăрахса тарнă. Кашни çул çĕнĕ учитĕл. Тепĕр чухне вĕренӳ çулĕ хушшинчех учитĕл улшăнаť.. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче икĕ çамрăк учитĕле хăй укçипех 2—3 хут ĕçтерсе ӳсĕртнĕ. Кайран Мокевнин: „Манăн шкула ĕçекен учитĕлсем килсе дисциплинăна йапăхтарчĕç“ тесе райçутĕç пайне те, тата ытти çĕре те пĕлтернĕ. Анчах учитĕлсене ĕçрен кăлармарĕç, кăлармаççĕ те.

Тепĕр çамрăк учитĕлĕн авторитетне çухатас майпа „ачасене хĕнет“ тесе суйа йат кăларнă. Кун çинчен райçутĕç пайне 15 хут ытла пĕлтернĕ. Райçутĕç пайĕнчи етемсем елекçĕне чиперех ĕненнĕ. Çамрăк учитĕле ĕçрен кăларса суда пама та хатĕр пулнă. Анчах лешĕ мăшкăла чăтаймасăр „Учительская газета“ редакцине çырса йанă. „Учительская газета“ фактсене тĕплĕн тĕрĕслеме хушсан çеç райçутĕç пай пуçлăхĕ Константинăв йулташ ĕçе тепĕр хут тĕрĕслесен, Мокевнин хăй „йуратнă вĕренекен“ ачасене учитĕл çинчен усал йат кăларма хушни палăрчĕ.

Тепĕр аван ĕçлекен çамрăк учитĕлницă çинчен елеклеме ним айăп та тупаймасăр аптăранипе: истори урокне мана кĕртмерĕ, клас алăкне питĕрсе лартнă, тесе елеклеме пуçланă.

Мĕншĕн-ха вăл капла елеклет? Мĕншĕн тесен хăйĕн айăпне аван ĕçлекен учитĕлсем çине йăвантарса хăй таса çын пулса йулма пикенет. Ахаӈтен мар ĕнтĕ çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн райçутĕç пайĕнче: „Тарăхасшăн мана кăçаллăха хăварăр“ тесе куççуӈпе йăлăннă. Çавăнпа ăна хăварнă.

Елеклеме çăмăл, елекшĕн ответ тытма йăвăр, теççĕ елеклесе пăхнă етемсем. Мăн Улхашри Мокевнин елекçĕ елек пама çăмăллине пĕлет, елекшĕн ответ тытма йăвăррине пĕлмест.

**Гр. Петров-Ливаш.**

# Пуп тумтирĕ çук пирки

*Йалсемпе колхозсенчи драмкружоксем сцена çине тухса выљамали тумтирсем çуккипе аптăраççĕ.*



— Тĕне хирĕçле çпектакăле мĕншĕн вырсарникун каç мар, шăматкун каç лартатăр?

— Вырсарникун каç лартма, май çук. Вăрăм тумтир пупа хăйне кирлĕ пулаť.

# Хырăм çурăм çумне хăнана кайсан

Пурнăçра тĕл килет вĕт вырăнтан вырăна куçса çӳреме те. Манăн йулашки вăхăтра Патăрйелне ĕçлеме куçмала пулчĕ. Малала вара Патăрйеленчех пурăнма пуçларăм.

Каланча çинчи чан 12 хут йантăраса илчĕ. Ку аван йапала. Кăнтăрла. 12 сехет çитнине пĕлтерет пулмала. Вăшăл-вашăл васкарах кăна паљтона тăхăнса йаратăп та, утатăп Патăрйел урамĕпе апат çиес шутпа. Утсан-утсан пĕринчен:

— Йулташ, столовăй ăçта кунта сирĕн?— ыйтатăп.

— Столовăй çук кунта,—ответлет.

Столовăй çук тенине илтсен хăраса ӳкрĕм. Ак йапала, ăçта апатланмала пулаĭ-ха тетĕп. Çӳçĕм вирелеˌтăрса карттуса пĕр шит çӳлеле çĕклерĕ.

— Йулташ, йепле-ха район центрĕ столовăйсăр пулаĭ,—тетĕп.

— Çаплах ара,—тет.

— Ара служăщчисем ăçта апатланса пурăнаççĕ вара?—тетĕп.

— Ааа-а... служăщчисем... вĕсем ресторанта апатланаççĕ,—тесе аллипе ресторан йеннеле чăсса кăтартрĕ.

Çитсе кĕретĕп ресторана. Ресторанта туллийех халăх. Хăшĕ буфет умне кĕпĕрленнĕ. Хăшĕпĕри буфет касси умне черет тăнă. Сахалтан пĕр аллă-утмăл çын пултăр.

— Мана, мана пар...

— Аçта ес черетсĕр?

— Ей, черетсĕр ан парăр унта!

— Ăçта, ма тĕртен,—тесе кăшкăраççĕ, тĕрткелешеççĕ.

Буфет кутĕнче пĕр-икĕ сехет черет тăрса ирттернĕ хыççăн мана та черет çитрĕ.

— Йулташсем, буфет касси тек талон сутмасĭ,—тесе хыттăн пĕлтерчĕ буфетчик.

— Мĕншĕн те мĕншĕн,—тапранса кайрĕ шав.

— Халех курссантсем 30 çын килмеле, апат вĕсене кирлĕ,—ответлет буфетчик.

Ман хыçра тăраканни пĕри буфетчика паллаканскер пулмала:

— Смирнов, мана мĕнле те пулсан апатлантарса йар-ха, терĕ шăппăн.

Çапла вара буфетчик мана черетрен хăварсах ман хыçри çынна талон парса йачĕ те:

— Тек пĕрре те сутмастăп,—терĕ.

— Йулташ, итле-ха ман хыçри йулташа патăр та, мана сиктерсе хăвартăр,—терĕм.

— Çук, тек сутмастăп,—терĕ.

Ăшăм-чикĕм йăлтах тулса çитрĕ, пит çăмарти тăрăх шăпăрах тар йухса анчĕ. Е, мĕн тăвас тен, памасĭ те памасĭ. Укçа пур çинчех выçă лармала пулаĭ-и тетĕп. Ĕлĕкрех ваттисем калаĭчĕç: йалта çерçи вилмест, тетчĕç. Çерçи мар, ак хам та выçăпа антрасах çитрĕм. Ирпе те васкаса çеç апатланса тухнăччĕ те. Хырăм йăлтах çурăм çумне хăнана кайрĕ.

— Йулташ, итле-ха, мана çеç çырса пар ĕнтĕ,— тесе тарăхарах ыйтрăм йулашки хут.

— Çырса парам еппин, тек антăратса çитертĕн ĕнтĕ пайан,—текелесе вăраххăн талон çырма пуçларĕ.

Тинех савăнтăм вара. Çурăм çумне хăнана кайнă хырăмăм та катлет çиме кайала таврăнчĕ. Анчах манăн савăнмаллийех те çук та-ха унта. Ларсан-ларсан савăннăскерĕн каллех хурланма лекрĕ. Котлетпа лапша вырăнне,—котлетпа паранкă, аш йашки вырăнне—пăрçа йашки илсе пырса пачĕç. Çакна официанкăсене çийĕнчех:

— Епĕ ку ĕçме-çимене илменччĕ,—терĕм.

— Есĕ илнĕ ĕçме-çимесем пиçсе çитеймен-ха,— теççĕ.

— Менӳ çине çырса хунă-çке тетĕп.

— Унта ахаљ çеç çырнă,—теççĕ. Манпа çумлă ларакан йулташсене те урăх ĕçме-çимели панă мĕн. Пĕр-пĕринпе кăмăлсăр пулса лараççĕ.

Тата пăртак ларсан пĕр официантки ман пата пычĕ те:

— Йулташ, пирĕн кофĕ пĕтнĕ. Кофе вырăнне мĕн парас,—терĕ.

— Мĕн пур сирĕн?—тетĕп.

— Сĕт пур,—терĕ.

— Ну йурĕ еппин, сĕтне илсе килсе пар,— тетĕп.

Çапла вара манпа пĕрле ларакан йулташсем те, хăшĕ кофĕ вырăнне сĕт, кĕсел, чей ĕçкелесе тухрĕç.

Сехет виççĕ çапсан ресторанран тухатăп та, хамăрăн канцељари йеннеле васкатăп. Тепĕр кунне каллех ресторанра çын нумай. Смирнов текен буфетчик каллех, йăхă пусса çитнипе, антăранă. Кашни 20—25 минутра пĕр çынна талон параĭ.

Смирнов йăхă-суйхалă терĕмĕр. Вăл йăхă-суйхалă пулин те, кусĕсем тилĕнни йевĕр чейен выљаççĕ. 2-мĕш кунхине манран та 69 пус укçа ытлашши илсе йулчĕ. Пĕр-икĕ пуссене нихăçан та кайала тавармасĭ. Ыйтсассăн: „похутлăх“ тет. Çак ресторанти çитменлĕхсен „ашшĕсене“ ытлашши мăнтăрланса кайнăскерсене, йĕплĕ кĕпе çĕлесе тăхăнтартса, йăйхран вăратма пулмĕ-ши?— тетĕп епĕ.

**Ибетăв-Илем.**

# Такасем тав туни

Шăнкăр-шăнкăр шыв йухаĭ, шăнкăрч чĕппи шыв ĕçет, чĕкеç чĕппин мĕн ĕç пур?

Епĕр такасене ачасен йаçлине хупнăшăн ытти çынсене мĕн ĕç пур?—теççĕ пулмала Трак районĕнчи Мăн Шетмĕ йаленче ачасен йаçлине такасем хупса усракансем.

Вĕсене: „пире йаçлин лайăх çуртĕнче усранăшăн, ачасен теттисемпе выљаттарнăшăн“, тесе такасем тав тăвассине кĕтсех пурăнма сĕнетпĕр.

**С.**



# Вулакансен жалӑбисем

## *Капкӑн муча!*

Кашни йалах район центрӗ тума ҫук-ши? Мӗн тума кирлӗ кашни йала район?—тесе ыйтӑн есӗ. Кирлӗ ҫав. Мӗншӗн тесен кӗнеке магазинӗсем район центрӗнче ҫеҫ вӗт. Ҫапла района кайатпӑр та: истори кӗнеки пур-и?—Ҫук, сутса пӗтернӗ, теҫҫӗ.—Тетрадсем пур-и?—Ҫук, сутса пӗтернӗ.—Перосем пур-и?—Ҫук, сутса пӗтернӗ, теҫҫӗ.

Ҫакӑн пек районри шкулсенчӗн кашни канмали кунах темиҫешер ҫӗр ача 10—15-шер ҫухрӑм таран район центрне кӗнекесем илме чупаҫҫӗ. Анчах унти магазинти кӗнекесене район центрӗнчи ачасемех илсе пӗтереҫҫӗ пулас, йут йалсенчен пынӑ ачасене илме ним те йулмасть. Ҫавӑнпа та кашни йалти вӗренекенсем кӗнекесем илччӗр тесен, кашни йалах район центрӗ тумала.

**Сӳпенкке.**

Мӑн Шетмӗ, Трак районӗ.

## *Капкӑн йулташ!*

Ӑсран тайлӑк ҫынна курнӑ-ши есӗ? Курман пулсан Чӑвашполиграфтрестӑн 1-мӗш № типографинче ӗҫлекен 109-мӗш номерлӑ проверщицӑна кайса кур. Ун алли урлӑ тухнӑ 1938 ҫулхи календаре февралӗн 19-мӗш кунӗнче Йетӗрнери книготоргра туйанса стена ҫумне ҫапса йатӑм. Малтан сисмен, кайран листисене уҫкаласа пӑхнӑ хыҫҫӑн, ҫӑвара карсах пӑрахрӑм. Календаре ӗнен-сен, ҫентӑберӗн 27-мӗшӗ хыҫҫӑн мартӑн 28, 29, 30, 31-мӗш числисемпе апрелӗн 1, 2, 3, 4-мӗш чыслисем пулаҫҫӗ иккен кӑҫал. Апрелӗн 4-мӗшӗ хыҫҫӑн октӑберӗн 6-мӗшӗ пулать.

Кала-ха „Капкӑн": ман куҫӑм чысласемпе уйӑхсене улшу куракан пулнӑ-ши, ай ҫав календарӗн листисене тӗрӗслекен 109-мӗш номерлӑ проверщицӑн куҫӗ пулман, куҫӗ вырӑнне ӗнси пӑхнӑ.

Ҫав ӗнсепе пӑхса тӗрӗсленӗ календаре ҫтена ҫумӗнчех усрас-и, ай кӑларса ҫапас?

**А. Токарӗв.**

## *Капкӑн вӑртахӑм!*

Есӗ ширпотреб таварӗсене туйанас тетӗн пулсассӑн, пирӗн пата—Трак районӗнчи Мӑн Шетмӗ йалне пыр. Унта есӗр Ваҫилий Илйин хушаматлӑ чӑсӑк пекӑр пӗҫерекен ҫӑкӑра илсе ҫисе пурӑнсан, пӗр ерне хушшинче хӑвӑра кирлӗ ширпотреб таварӗсене пурне те тупма пултаратӑр. Сӑмахран, епӗ ҫав пекӑр пӗҫернӗ ҫӑкӑр ӑшӗнчен виҫӗ кун хушшинчех кӑранташ хуҫӑкӗ, икӗ перо тата чӑх тӗкӗ тупрӑм (ку йулашкийӗ ширпотреб таварӗсен ҫпискине кӗмест те-ха ӗнтӗ)... Ӗҫ ҫакнашкалах ӑнса пырсан, 1938 ҫул тухнӑ ҫӗре епӗ вӑл йапаласенчен муҫей организацилес пуль тетӗп. Тӗкӗсене пуҫтарса тӳшек ҫӗлетес.

Пирӗн пата ширпотреб туйанма килес кӑмӑл ҫук пулсан, кӗркунне ман музейа та пулин килсе кур.

**С. М.**

★ ★ ★

Секретарь и вып. редактор *ИЛЛАРИОНОВ*. За отв. редактора *И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР*.
Сдано в производство 15/IV—38 г. Подписано к печати 23/V—38 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 251. Заказ № 0357.
Формат бумаги 58×83¹/₈ Об'ем 2,5 п. л. Чебоксары, тип. № 1 Чувашполиграфтреста. Тираж 5200. Изд. газ. „Чӑв. Ком."

Хакĕ 40 пус




## Ыйту çине ыйту

— Мĕншĕн сирĕн Куйбышĕвра пысăк строительствă пуçланса кайсан çĕпĕрте те, Украинра та, Казахстанра та хĕпĕртеççĕ?

— Мĕншĕн пирĕн Куйбышĕвра, йе Çĕпĕрте, йе Украинра, йе Казахстанра, пысăк строительствă пуçланса кайсан Берлинра та, Римра та, Токиора та